Шупашкар район хаҫачӗ ✵ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

39 (9181) № ✵ 2006 ҫулхи апрелӗн (ака уйӑхӗн) 12-мӗшӗ. Юн кун ✵ Хакӗ ирӗкле

✵ Ҫӗнӗ опыт

## КУНТА ХӐЙНЕ МАЙ ӖҪЛЕҪҪӖ



✵ **В.Михайловӑн та ыйтса пӗлмелли пур.**

Пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ, апрелӗн 6-мӗшӗнче район делегацийӗ - ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем, ял хуҫалӑх производство предприятийӗсен ертӳҫисем - Мордва Республикинче Ардатов районӗнче пулчӗ. Ӑна район пуҫлӑхӗ А.Князев хӑй ертсе пычӗ, йышра ҫавӑн пекех администраци ӗҫӗсен, йӗркелӳпе контроль, кадрсен управленийӗн пуҫлӑхӗ В.Михайлов пулчӗ.

Ардатов хули - района пӑхӑнса тӑракан хула, 225 ҫул каялла никӗсленӗ, районӗнче 32 пин ҫын пурӑнать (пирӗн районта - 68 пин), Мордва Республикин ҫурҫӗр енче вырнаҫнӑ, пирӗн Пӑрачкав тата Улатӑр районӗпе ҫумлӑ. Ытларах ял хуҫалӑхӗпе ӗҫлет, 50 пин гектар майлӑ сухаламалли ҫӗр. Республикинче пирӗнни пекех, 40 процент - ял халӑхӗ, пурӗ 876 пин ҫын пурӑнать (пирӗн - 1.3 млн. ҫын).

Пӑрачкав районӗнчи ялсем пит пуянах мар, кӑна нумайӑшӗ пӗлеттӗр. Анчах Мордва енчи ялсем татах чухӑнраххи палӑрать. Ҫапах кунта ӗҫлеме тытӑнни те часах курӑнчӗ. Калӑпӑр, пӗр икӗ ҫул каялла ҫӗрсен пысӑк пайне сухаламан та пулсан, иртнӗ ҫул сухаламан е акман ҫӗр хӑварманнине пӗлтерчӗҫ.

Анчах чи малтан самоуправлени реформи ҫинчен. Пире администрацин авалхи илемлӗ ҫуртӗнче унӑн пуҫлӑхӗ, ҫулталӑк каялла суйланнӑ В.Сидоров кӗтсе илчӗ. Вӑл, хыҫҫӑн унӑн заместителӗсем, пире район ҫинчен каласа пачӗҫ. Кунта паян район ертӳҫи ҫеҫ мар, пӗтӗм ҫӗнӗ ял тӑрӑхӗсен ертӳҫисем хӑйсен бюджечӗсене пуянрах тӑвас тесе ҫӗр ҫывӑрмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Ара, вӗсен ӗҫ укҫи хӑйсен тӳрӗ тивӗҫне пурнӑҫланинчен ҫеҫ мар, халӑхран мӗн чухлӗ сӗт, аш-какай, пахча-ҫимӗҫ пуҫтарса тирпейлекен предприятисене сутнинчен, кӑҫалтан акӑ тата вырӑнта шурӑ эрех мӗн чухлӗ туяннинчен, вырӑна инвестици хывнинчен тӳрремӗнех килет. Ҫавӑн пекех ҫӳлтен яла дотаци ытларах илес тесен кӑтартусене ҫӳллӗ шайра пурнӑҫламалла.

Пире эрех сутассине те вырӑнта показательсен шутне кӗртни тӗлӗнтерчӗ. «Ан кулӑр, ҫакӑ шӑпах ялсенче наркӑмӑшла суррогатсем, сӑмакунсем сутасран сыхланмалли мероприятисенчен пӗри»,- терӗ Ардатов район ертӳҫи Владимир Николаевич. Каярахпа сӑмахпа паллаштарнӑ «Мордовзерноресурс» тата «Агроардатов» ял хуҫалӑхӗ енӗпе ӗҫлекен акционерсен хупӑ обществисенче пултӑмӑр. Вӗсенчен пӗри ҫулталӑк, тепри икӗ ҫул каялла йӗркеленнӗ. Шӑпах ҫавсем ӗнтӗ юхӑнса пыракан хуҫалӑхсен ҫӗрӗсене, уйрӑм ҫынсен пайӗсене илсе вӗсене чун кӗртме пултарнӑ.

Чӑн та, ҫӗрпе ӗҫлекен ҫакнашкал хӑватлӑ, ҫӗнӗ тата нумай техникӑллӑ хуҫалӑхсене ни хӑй кӑна пӗлтӗр 550 миллион тенкӗлӗх кредит илнӗ. Ҫӗнӗ комбайнсем, К-700, МТЗ 1221 тракторсем, унӑн паркӗнче халь ҫителӗклӗ. Ҫавнах «Агроардатов» предприяти ҫинчен калама пулать. Пӗри унчченхи Сельхозтехника бази ҫинче тымар янӑ пулсан, тепри - Сельхозхими бази ҫинче. Ҫӗр ӗҫӗсӗр пуҫне вӗсем мӑйракаллӑ шултра выльӑхпа та ӗҫлеҫҫӗ. Хӑйсем пӗлтернӗ тӑрӑх, ӳсӗмӗ те пур.

Кӗске визит вӗҫӗнче кӑҫал туса пӗтернӗ физкультурӑпа сывлӑх комплексӗнче пултӑмӑр. 3 хутлӑ та илемлӗ сооруженине федераци тата республика пулӑшӑвӗпе тунӑ. Ҫакӑнпа тӗл пулусем вӗҫленчӗҫ.





✵ **«Мордовзерноресурс» паркӗнче хуҫисем ӑнлантараҫҫӗ. Сулахай енчи А.Князев, унпа ҫумлӑ В.Сидоров.**

курсан эпир тӗлӗнтӗмӗр. Калӑпӑр, вӗсем иккӗшӗ те республикӑри чи вӑйлӑ предприятисен хӑвачӗпе чӑмӑртаннӑскерсем, апла вӗсен хӑйсен укҫисем те сахал мар. Ҫапах та «Мордовзерноресурс» текен-

**В.СОРОКИН.**

✵ Вӗрентӳ

## ЛАЙӐХХИ ТЕ, ЯПӐХХИ ТЕ КУРӐНАТЬ

**Педагогсем пӗрле пуҫтарӑнса пӗр-пӗрин опычӗпе паллашни кирлех. Ҫакӑ йӑнӑшсенчен пӑрӑнма, лайӑхрах ӗҫлеме май парать. Эрне кун акӑ, класс ертӳҫисем семинара пухӑнчӗҫ. «Вӗренекене хӑй тӗллӗн аталанма, обществӑра хӑйӗн вырӑнне ӑнӑҫлӑ тупма майсем туса парасси» - шӑпах ҫак темӑна хускатрӗҫ те унта учительсем.**





✵ **Кӳкеҫ кустӗнчи класс ертӳҫисем нумайӑн пухӑнчӗҫ.**

Малтанах район администрацийӗн вӗрентӳ управленийӗн начальникӗ наци проекчӗн Раҫҫей шайӗнчи направленийӗсем пирки чарӑнса тӑчӗ. Пирӗн районти ларутӑру ытти семпе танлаштарсан лайӑхрах та иккен. 4 шкул - Кӳкеҫри 1-мӗш номерлӗ шкул, лицей, Тренккассисемпе Тутаркассисем - 1 миллион тенкӗ илессишӗн тупӑшӗҫ, 10 ытла педагога чи лайӑххисем тесе йышӑнсан 100 пин тенкӗ парӗҫ. Сӑмах май, ку премие илме учительсем хӑйсен заявленийӗсене тӑратассин юлашки кунне май уйӑхӗн варриччен тӑснӑ.

Патшалӑх пӗрлӗх экзаменӗсене тытассипе те пирӗн район кӑтартӑвӗ республикӑринчен ытлах сахал мар. Вӗрентӳ процесӗнче ҫӗнӗ технологипе усӑ курасси те вӑй илсе пырать. Акӑ пӗр компьютер пуҫне халӗ 18 ача лекет. Республикипе илсен ку кӑтарту пӗчӗкрех - 28 вӗренекене пӗр экран тивет.

Герман Васильевича шкул ачи преступлени ҫулӗ ҫине тӑни те пӑшӑрхантарать. Акӑ иртнӗ ҫул вӗренекен тунӑ саккуна хирӗҫ 54 ӗҫ регистрациленӗ. Кӑҫалхи 1-мӗш кварталта ҫеҫ вӗсен йышӗ 8 ҫитнӗ. Ытларах пурлӑх тата «мобильник» ҫаратассипе «палӑраҫҫӗ» вӗренекенсем. Ашшӗ-амӑш прависӗр хӑварассинче республикипе те пире ҫитекен районпа хула ҫук. Класс ертӳҫин вӗрентӳ ҫинчен ҫеҫ шутламалла мар, тӗрлӗ енлӗ воспитани памалла ачана. Апла пулсан педагогӑн хӑйӗн та анлӑ тавракурӑмлӑ пулмалла. Кунта, паллах, вӗрентӳ пособийӗсем, тӗрлӗ хаҫат-журнал пулӑшаҫҫӗ. Шел те, пирӗн районта кӑна ытлах тимлемеҫҫӗ. Ҫакна ҫырӑнтару тапхӑрӗнче почтальонсем кӑмӑлсӑрланни те ҫирӗплетет. «Ӑҫта-ӑҫта та, пирӗн тӑрӑхри учительсем хаҫат-журнал мар, вӗрентӳ пособийӗсене те ҫырӑнмаҫҫӗ»,- тенине пӗр ҫыхӑну уйрӑмӗнче ҫеҫ мар илтнӗ. Класс ертӳҫисен ӗҫне тӳрремӗнех ҫӑмӑллатакан «Классный руководитель» журнал та пичетленсе тухать. Мӗнех калайӑн, районӗпе 352 класс ертӳҫи пулсан, пирӗн тӑрӑха 26 экземпляр ҫеҫ килет. Питӗ сахал. Районта 30 шкул, кашни вӗренӳ заведенийӗ валли те ҫитмест. Япӑх паллах, нумай пӗлекен педагог ҫеҫ ачана нумай кирлӗ информаци параять. Темле пулсан та, лайӑх ӗҫлекен класс ертӳҫисем те пур-ха. «Чи лайӑх класс ертӳҫи» районти конкурс ҫӗнтерӳҫи акӑ, 1-мӗш номерлӗ шкулти Н.Г.Пименова, пухӑннисене хӑйӗн опычӗпе паллаштарчӗ.

Кун хыҫҫӑн класс ертӳҫисем секцисем тӑрӑх пайланса лекцисем итлерӗҫ. Класс ертӳҫин ӗҫне планласси тата унӑн проектне хатӗрлесси, вӑйӑ тренингӗ, социаллӑ пулӑмӑн профилактика, ытти нумай япалана тӗпчерӗҫ педагогсем.

**А.СУСМЕТ.**

### ВИҪҪӖМӖШ ХУТ ЕВРОПА ЧЕМПИОНӖ

Германири Констанц хулинче Сето-Кан Каратэ-до енӗпе Европӑн IX чемпионачӗ иртнӗ.

Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ команди йышӗнче пирӗн паллӑ ентеш, Чаканар каччи, И.Я.Яковлев ячӗллӗ педагогика университечӗн аспиранчӗ, тухӑҫ халӑхӗсен кӗрешӗвӗн тренерӗ Дмитрий Фомиряков ӑнӑҫлӑ кӗрешнӗ.

Вӑл тӑхӑр хутчен татами ҫине тухнӑ, пурне те вӑхӑт ҫитиччен парӑнтарнӑ. Финалта Украинӑри каратистпа тӗл пулнӑ.

Чӑваш каччи малтан та - 2003, 2004 ҫулсенче - кубок ҫӗнсе илнӗ.

Финалти вӑйӑ ҫав тери кӑткӑс иртнӗ, ҫав вӑхӑтрах хӑйне евӗр хитрелӗхпе палӑрнӑ. Тытӑҫӑвӑн иккӗмӗш пайӗнче Дмитрий тӗлӗнмелле пултарулӑх кӑтартса Украина спортсменне 4:2 шутпа парӑнтарнӑ.

Ҫапла майпа Д.В.Фомиряков Европӑн IКА кубокне виҫҫӗмӗш хут ҫӗнсе илнӗ.

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

### КӖҪӖННИСЕМ НУМАЙРАХ ВУЛАҪҪӖ

«Нумай вулатӑн - малалла каятӑн»,- тетчӗ кӗҫӗн класра вӗреннӗ чухне класс ертӳҫи. Тӗрӗсех, хамӑра кирлине эпир вулавӑшра тупма пултаратпӑр. «Кӗҫӗн класра вӗренекенсем хаваспах ҫӳрени сисӗнет. Вӗсене юмахсем те, шутламалли сӑвӑсем те интереслентереҫҫӗ. Аслӑраххисем писательсемпе поэтсен пултарулӑхӗпе паллашаҫҫӗ»,- тет районти ача-пӑча библиотекин заведующийӗ О.В.Владимирова.

Ольга Вячеславовна ҫавӑн пекех ачасем хӑшӗ мӗн чухлӗ кӗнеке вуланине те шута илсе кашни уйӑх, квартал, ҫулталӑк вӗҫӗнче ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртать. Акӑ, ку кварталта вулав залӗпе 1-мӗш номерлӗ шкулта 2-мӗш класра вӗренекен Анна Ивановна ҫитекенни пулман. Вӑл 56 кӗнекепе журнал пӑхса тухнӑ. Шкул-интерната 5-мӗш класа ҫӳрекен Рустам Замонов та юласшӑн мар - 47 экземпляр ун ячӗ ҫине ҫырӑннӑ. Абонементра та вулакансем нумай. 1-мӗш номерлӗ шкулти Ксения Комиссарова 3 уйӑхра 20 кӗнеке «шӗкӗлчеме» ӗлкӗрнӗ. Лицее 7-мӗш класа чупакан Димитрий Деменцев 18 кӗнеке вуласа тухнӑ.

**А.АЛИНИНА.**

✵ Ҫырӑнтару

### ЭКЗЕМПЛЯР ХУШӐНСАХ ПЫРАТЬ

Камӑн-камӑн та, почтальонӑн пӗрре те канма май килмест. Пӗр ҫур ҫулшӑн ҫырӑнтару тапхӑрне вӗҫлетӗн ҫеҫ, теприншӗн чупма та пуҫламалла. Акӑ ҫӑмӑллӑхлӑ майпа периодика изданийӗсене ҫырӑнтарассипе Клиент кунне хыҫа хӑварса кӑҫалхи иккӗмӗш ҫур ҫулшӑн тӗп ҫырӑнтару тапхӑрӗ пуҫланчӗ те. «Апрелӗн 5-мӗшӗнче Клиент кунӗнче 472 экземпляр хаҫат-журнал хӑйӗн хуҫине тупрӗ. Ҫӑмӑллатнӑ майпа йӗркеленӗ ҫырӑнтарупа иккӗшне пӗрле илсен, пӗтӗмпе паянхи куна 3745 экземпляр периодика изданийӗ ҫырӑнтарнӑ. Вӑл шутран «Тӑван Ен» - 482. Ҫакна та палӑртса хӑварасшӑн, темиҫе ҫур ҫул умлӑ-хыҫлӑ нумай хаҫатӑн хакӗ тӗп ҫырӑнтару тапхӑрӗнче те хӑпармасть»,- пӗлтерчӗ Кӳкеҫри почтамт начальникӗ Н.И.Правдина.

Хамӑр енчен хушса калар: «Тӑван Ен» хаҫат малашне те хӑйӗн тиражне ӳстерессе шанса тӑратпӑр.

**А.АРДАЛИОНОВА.**

**Хисеплӗ вулакансем!**

**Ҫырӑнтару тапхӑрӗ малалла пырать. Район хыпарҫине, «Тӑван Ене», унччнехи хакпах - 146 тенкӗпе - ҫырӑнтараҫҫӗ. Почта уйрӑмӗсенче сире хапӑл туса кӗтеҫҫӗ.**

✵ Синоптиксем пӗлтернӗ тӑрӑх

**Юн кун, апрелӗн 12-мӗшӗ**
ҫумӑр ҫӑвать, кӑнтӑрла +5⁰...+7⁰ ҫӗрле +1⁰...+3⁰

**Кӗҫнерни кун, апрелӗн 13-мӗшӗ**
улшӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк, кӑштах ҫумӑр ҫӑвать, кӑнтӑрла +9⁰...+11⁰ ҫӗрле +1⁰..+3⁰

**Эрне кун, апрелӗн 14-мӗшӗ**
улшӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,кӑштах ҫумӑр ҫӑвать, кӑнтӑрла +13⁰...+15⁰ ҫӗрле +6⁰...+8⁰

**Шӑмат кун, апрелӗн 15-мӗшӗ**
улшӑнса тӑракан пӗлӗтлӗ ҫанталӑк,кӑштах ҫумӑр ҫӑвать, кӑнтӑрла +10⁰...+12⁰ ҫӗрле +6⁰...+8⁰

✵ Ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑхшӑн

# ЮСАВЛӐ ТЕХНИКА, ӐСТА ВОДИТЕЛЬ - ИНКЕКСӖР ҪӲЛ ҪӲРЕВ

**Милици сводкисем кашни кун ҫул-йӗрте автоаварисем пулни ҫинчен пӗлтерсе тӑраҫҫӗ. Ҫак авӑра лекнисен ҫемйисене, тӑванӗсемпе ҫывӑх ҫыннисене мӗнле хуйхӑ килсе ҫапни каламасӑрах паллӑ. Тӗплӗнрех анализ тусан паллӑ: ҫак инкексемшӗн хамӑрах айӑплӑ-ҫке. Пӗр ҫын йӑнӑшне пула темиҫе ҫын пӗр самантра пурнӑҫран уйрӑлма е сусӑрланса юлма пултарать. Каланӑччӗ ӗнтӗ, Раҫҫейре ҫулсеренех 35 пин ҫын таран автоаварисенче пурнӑҫран уйрӑлать. Ҫул-йӗрти инкексене сирес енӗпе, паллах, техника тӗрӗслевӗн служби те пысӑк вырӑнта. Темиҫе ҫул ӗнтӗ Кӳкеҫре вырнаҫнӑ диагностика центрӗ автомашинӑсен юсавлӑхлине тӗрӗслесе тӑрать. Диагностика центрӗн аслӑ инспекторӗ П.И.ЕРОФЕЕВ пире хӑш-пӗр ыйтусенче усӑмлӑх тупма пулӑшрӗ.**



Фото ӳкерчӗкӗсем авторӑн.

**- Петр Иванович, автомашинӑсен тӗрӗслевӗ халӗ палӑртнӑ графикпа ҫулталӑкӗпех пырать. Вӑл «Тӑван Ен» хаҫатра та ҫапӑнса тухрӗ-ха. Ҫав йӗрке пурнӑҫланса пырать-и?**

- Палӑртнӑ пекех пулса пырать теейӗмӗн. Уйрӑмах хӗллехи, ҫуркуннехи уйӑхсенче предприятисемпе организацисене йывӑртарах. Ун пек чухне вӗсен ертӳҫисен, вӑхӑтра килме пултараймаҫҫӗ пулсан, районти ҫул-йӗрти хӑрушсӑрлӑх енӗпе ӗҫлекен уйрӑма ҫырупа тухса тӗрӗслеве каярах ирттерме ыйтма пулать. Анчах та пӗлтермесӗрех килмесен е иккӗмӗш вӑхӑтра та хатӗр пулмасан яваплӑ специалистсене штраф кӗтет.

**- Халӗ ҫӗнӗ правилӑсем пирки те сахал мар калаҫаҫҫӗ, тӗрлӗ улшӑну тума пӑхаҫҫӗ.**

- Техосмотр енчен илсен те хӑш-пӗр уйрӑмлӑхсем пур. Машина туянтӑн пулсан вӑтӑр кун хушшинче ӑна регистрацилемелле, техосмотр малтан икӗ ҫултан тухнӑ пулсан, халӗ виҫӗ ҫултан. Ҫичӗ ҫулччен ҫӑмӑл машинӑсемпе виҫӗ тонна ҫурӑ таран тавар турттаракан автомобильсем икӗ ҫулта пӗрре, е 24 уйӑхран, тӗрӗслевре пулаҫҫӗ. Виҫӗ тонна ҫурӑран ытларах турттаракансем вара - кашни ҫул.

**- Ҫула тухса вырӑнта тӗрӗслев ирттермелли ятарлӑ машина пур сирӗн, унпа часчасах усӑ куратӑр-и?**

- Пӗлетӗр ӗнтӗ, эпир виҫӗ района, хамӑр районсӑр пуҫне Ҫӗрпӳпе Красноармейски районӗсенче регистрациленӗ автомашинӑсене те диагностика витӗр кӑларатпӑр. Вӑл районсене палӑртнӑ кун хамӑрӑн диагностика машинипе ҫӳретпӗр. Хамӑр районта та машинӑсем нумай пулсан, хуҫисем маларах килсе заявка парсан тӗрӗслеве вырӑна тухса ирттеретпӗр.

**- Мӗнле ҫитменлӗхсем ытларах палӑраҫҫӗ?**

- Техосмотра килекен машина чи малтан таса пултӑр. Сӑрӑсем кайса пӗтнӗ, лайӑх ҫуса тасатман кузовпа двигателе тата ытти пайсене те мӗнле тӗрӗслӗн-ха? Тормоз системипе руль управленийӗнче час-часах ҫитменлӗхсем пур. Теприсем тата е ҫӑмӑл автомашинӑн, е йывӑр автомобилӗн номерлӗ пайне улӑштараҫҫӗ те (кузов, двигатель тата ытти те) ун ҫинчен ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх управленине пӗлтермеҫҫӗ. Апла пулсан вӗсен техосмотр тухма та ирӗк ҫук. Унсӑр пуҫне кузов, двигатель блокӗсен номерӗсене килте ҫапнӑ тӗслӗхсем те пулкалаҫҫӗ. Ку вара пире улталама пӑхни пулать. Вӗсене эпир экспертизӑна яратпӑр.

Иртнӗ ҫулхи октябрӗн 27-мӗшӗнче тухнӑ постановленипе килӗшӳллӗн ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх управленийӗпе суд приставӗсен служби ҫул-йӗр правилисене пӑснӑшӑн хунӑ штраф укҫине тӳлеменсен те техосмотр кӑлармаҫҫӗ. Патшалӑх умӗнче парӑм ҫуккине калакан справка кирлӗ.

**П.ПАВЛОВ.**

✵ **Диагностика центрӗн аслӑ инспекторӗпе П.И.Ерофеевпа Р.Ю.Тимофеев инспектор черетлӗ тӗрӗслевре.**

✵ Право тата мораль

# ХӐЙСЕНЕ ХӐЙСЕМ ПӲЛЕҪҪӖ

**Статистика палӑртнӑ тӑрӑх, пӗрре преступлени тунӑ ҫынсемех тепре саккуна пӑснипе ҫакланаҫҫӗ. Айӑплава тӳссен те, темӗн чухлӗ «мораль» вуласан та усал ӗҫе тума алӑ кӗҫӗтсех тӑрать теҫҫӗ ун пек чухне. Ҫакна пурнӑҫра тӗл пулакан ҫӗр-ҫӗр тӗслӗх ҫирӗплетет.**

## Ҫын укҫипе пуяймӑн

Шорчекассинчи А.13 ҫулта ҫеҫ пулин те аслисемпе вӑрра кайма именмен, мӗншӗн тесен ун пурнӑҫӗнче ют пурлӑха хапсӑнни пӗрремӗш те, юлашки хут та пулман. Ял хуҫалӑх складӗнчен пӑрҫа «пӗҫертсе» тухсан вӑрӑ-хурах шайкипе пӗрле вӑл та милици аллине лекет. Ку тӗлӗшпе уголовнӑй ӗҫ пуҫараҫҫӗ, кӗҫӗннине ҫул ҫитмен ҫамрӑксен инспекцине учета тӑратаҫҫӗ. Тытман вӑрӑ - вӑрӑ мар теҫҫӗ пулсан, кунта акӑ алӑранах ярса илнӗ. Ҫакӑ тин кӑна пурӑнма пуҫланӑ пурнӑҫӗнче хура тӑха евӗр юлӗ. Суд пулса йышӑну тӑвиччен ҫак ача тепӗр хура ӗҫре аллине варалама ӗлкӗрет. Ҫав кунхине вӑл ашшӗпе пӗрле районти ШӖПе хӑйне паллӑ тутарма пынӑ. Профилактика та ирттернӗ унпа, хӑшпӗр саккунпа та паллаштарнӑ, ҫирӗп асӑрхаттарнӑ. Ача йӑлтах ӑнланнине ҫирӗплетсе алӑ та пусса хӑварнӑ. Анчах инспектор пикенсех тӑнлантарнине нимӗн те ӑша хывман иккен, калани чунӗ патне ҫитмен. Сӑмах пӗр хӑлхаран кӗрсе тепринчен тухса кайнӑ. Киле ҫитиччен пӗрре кукӑрӑлнӑ аллипе преступлени туса хурать. Ашшӗ те пӗрле пулнӑ терӗмӗр-ха. Вӑл мӗне пӑхнӑ? Ҫул ҫинче пӗр пӗлӗшне тӗл пулса хупаха кӗнӗ, ывӑлӗ те ҫумрах. Арҫынсем эрех, ҫырткаламалли илсе сӗтел хушшине кӗрсе ларасҫӗ. Ҫакӑнта ачан вичкӗн куҫӗ ют ҫыннӑн укҫине асӑрхать те. Лешӗ ӳсӗрӗлсе кайсанах куртка кӗсйинчи 1150 тенкине, 150 тенкӗлӗх телефон карттине кӑларса илет. Хӑйӗн сотовӑйӗ те пулман-ха. Каярахпа вӑрланӑ укҫапа телефон туянса ярать. Амӑшне те кӑштах апат-ҫимӗҫ илмелӗх парать. Ҫын укҫипе мала каяймӑн, усал ят ҫыпӑҫсан намӑс курасси кӑна. Халӗ унӑн шӑпи ҫип ҫинчи пекех. Анчах никам та мар-ҫке, хӑйне валли хӑех капкӑн лартнӑ вӑл, шӑтӑк алтнӑ.

## Комисси хыҫҫӑн - вӑрра

Шорккари М.тата Г.та комисси умӗнче пӗрремӗш хут мар тӑраҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхра кӑна-ха вӗсене ашшӗ-амӑшӗпе пӗрле чӗннӗччӗ. Анчах пӗрин амӑшӗ операци хыҫҫӑн йывӑр выртнипе, тепри ывӑлӗшӗн пит хӗретсе ывӑнтӑм тесе ачисене хӑйсем тӗллӗнех кӑларса яраҫҫӗ. Шкулта вӗреннӗ чухнех ырӑ енчен палӑрман ҫак икӗ тус. М. 7-мӗш класра виҫӗ ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн шкула пӑрахнӑ, Г. 8 класс пӗтернӗ - мӗнпур пӗлӳ илни те ҫакӑ ҫеҫ. Анлӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑма тӗрев илме ку ытла та ҫителӗксӗррине хальлӗхе ӑнланмаҫҫӗ-ха вӗсем. Мартӑн 1-мӗшӗнче комиссире те сахал мар ӑс параҫҫӗ ҫамрӑксене, вӗсен шӑпипе кӑсӑкланаҫҫӗ. Никама тӑнламан, ашшӗ-амӑшне хӗрхенме пӗлменскерсем комиссирен тухсанах черетлӗ «паттӑр» ӗҫре палӑраҫҫӗ. «Дружба» предприятин хранилищинчен электродвигатель тиесе тухаҫҫӗ. Машина хуҫипе те малтанах калаҫса татӑлнӑ. Анчах мотора сутса яма ӗлкӗреймеҫҫӗ.

Ҫӳлерех асӑннӑ ҫамрӑксен ҫемйисене характеристика панӑ тӑрӑх, кашниннчех ҫитменлӗхсене палӑртнӑ. Килти йӑла-йӗркери условисем начар, ашшӗ е амӑшӗ ӗҫет, ҫемье тухӑҫӗ пӗчӗк. Тата, паллах, аслисем ачисен шӑпипе кӑсӑкланмаҫҫӗ, воспитани парассипе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫул ҫитмен ҫамрӑксем тӗлӗшӗпе хӑйсен тивӗҫне пурнӑҫламаншӑн ашшӗ-амӑшӗсем ҫине ПДН комиссийӗ штраф хунӑ.

**А.ИЗМАН.**

# ТӐХТАМА ЫЙТАҪҪӖ

Кайӑк-кӗшӗк грипӗпе сыхӑннӑ лару-тӑру ҫивӗчленсе пынӑ май чир малалла сарӑлассинчен хӳтӗленсе шӑнкӑрч йӑвисене кӑҫал кил умне ҫакма тӑхтамалла - ҫапла асӑрхаттарать Роспотребнадзорӑн эпидемиологи пайӗ. Ҫакӑ йӑвана чирлӗ кайӑк вырнаҫса килтисене ертессинчен сыхланма пулӑшать.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

# ӖМӖРЛӖХ АСРА ХӐВАРМА

Н.Федоров Президент хушӑвӗпе килӗшӳллӗн, Чӑваш халӑх поэчӗ Геннадий Айхи пултарулӑхне ӗмӗрлӗхе асра хӑварас тӗллевпе 2007-2010 ҫулсенче унӑн вырӑсла тата чӑвашла ҫырнисен пуххине пичетлесе кӑлармалла. «Чӑваш Енӗн паллӑ ҫыннисем» библиографи ярӑмӗнче поэтӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗн ятарлӑ томӗ кун ҫути курӗ. Айхи пултарулӑхӗ ҫинчен республикӑри шкулсенче вӗренӗҫ - ҫакӑ чӑваш чӗлхипе литературин пӗтӗмӗшле пӗлӗвӗнче патшалӑх стандартӗнче юлӗ. Ӑна Раҫҫей шкул программине кӗртнӗ пӗрремӗш хальхи поэт-авангардист тесе хаклама май пур.

Ҫак хушурах Шупашкар хулин пӗр ҫӗнӗ урамне Г.Айхи ятне пама сӗннӗ.

**А.ТИМОФЕЕВА.**

# КӖРЛЕРӖ ВӐРҪӐ, ҪУНЧӖ ҪӖР, АНЧАХ ҪУНМАРӖ ПИРӖН ХАЛӐХ

**Шӑпах ҫак ятпа иртнӗ ҫул районта конкурс иртнӗччӗ. Унта Тренккассинчи шкулта вӗренекен Елена ФОМИНА 1-мӗш вырӑн йышӑнчӗ. Республикӑра ҫак ӗҫе виҫҫӗмӗш вырӑнпа хакланӑ. Паян сочинение хаҫатра кӗскетсе пичетлетпӗр. Унӑн тӗп сӑнарӗ март вӗҫӗнче 80 ҫул тултарчӗ.**

**Шкул ачи ҫырать**
**тетрадь ҫине:**
**ан пултӑр вӑрҫӑ нихӑҫан!**
**Ӗҫҫынни пырать**
**плакат йӑтса:**
**ан пултӑр вӑрҫӑ нихӑҫан!**
**Мӗнпур ҫын калать**
**пӗр сасӑпа:**
**ан пултӑр вӑрҫӑ нихӑҫан!**

«Вӑрҫӑ» сӑмах ытла та хӑрушшӑн, сиввӗн илтӗнетҫке. Вӑрҫи те, иккӗмӗш тӗнче вӑрҫи, ытла та тискер те пысӑк ҫухатусемпе пулнӑ вӗт-ха. Вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ, вӑл кӳрекен хӗн-асап, ҫухатусем ҫинчен нумай ҫырнӑ, ҫыраҫҫӗ те. Эпӗ вара хамӑн хӑйлавӑмра вӑрҫӑ асапне хӑй чун-чӗри витӗр кӑларнӑ, ун йывӑрлӑхне черчен хул пуҫҫи ҫинче йӑтса Ҫӗнтерӳ патне утнӑ пӗр лайӑх ҫын ҫинчен ҫырасшӑн. Ку вӑл - Апполинария Захаровна Захарова, манӑн асанне.

Ҫук, ҫук, вӑл алла пӑшал тытса вӑрҫӑ вутне кӗмен. Киносенче кӑтартакан паттӑр хӗр-летчицӑсем пек тӑшман пуҫӗ ҫине вут та тӑкман. Анчах та 17-18 ҫулхи хӗр аллинчи уй-хирте ака-суха, тырӑ-пулӑ тӑвакан трактор фронтри тӑшмана ҫӗмӗрекен танкран пӗрре те кая мар пулнӑ тесе шутлатӑп.

Асанне хӑй ҫинчен каласа панине итлесе ларма юрататӑп эпӗ.

«Эпир курнӑ нушана ман ачасен те, мӑнукӑмсен те курмалла ан пултӑрччӗ. Пач та кирлӗ мар-ха та ҫав вӑрҫӑ япали...»,- пуҫлать хӑйӗн сӑмахне асанне.

Вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫул 15 ҫулхи хӗр пулнӑ-ха вӑл. Автанҫырми ялӗнчен Илпешри тата Ҫӗньялти шкулсене 7 ҫулталӑк ҫул такӑрлатнӑ. 16 тултарсан Кӳкеҫре тракторпа ӗҫлеме вӗреннӗ. 1943-мӗш ҫулта 17 ҫулхи ҫап-ҫамрӑк хӗр тимӗр утпа колхоз уйне тухать.

«Пирӗн ҫулхи ҫамрӑксене вӑл вӑхӑтра Свердловскри ФЗОна вӗренме кайма пуҫтаратчӗҫ. Манӑн аттеаннерен уйрӑлса каяс килмерӗ пулмалла. Анфиса юлташ-хӗрӗм чӗннипе Кӳкеҫе тракториста вӗренме ҫул тытрӑмӑр»,- тет асанне хӑй мӗншӗн ҫак профессие алла илнине ӑнлантарса. Ҫуркуннерен пуҫласа кӗркуннеччен иртен пуҫласа каҫчен трактор ҫинчен анман вӑл. Уйрах кунланӑ та, ҫӗрленӗ те. Пӗр-ик сехет ҫывӑрса илнипех ӑҫтан вӑй-хӑват тупнӑ-ши хурҫӑ ута пӑхӑнтарса ака-суха тума ҫепӗҫ те ачаш чунлӑ чӑвашӑн сӑпайлӑ хӗрӗ? Тракторсене ӗҫсӗр пӗр-ик сехет те лартман. Юраман ун пек тума. «Ман ик сыпӑкри Михал пичче питӗ йывӑр аманса таврӑннӑччӗ. Вӑрҫӑран килнӗ ҫынпа та калаҫса ларма вӑхӑт пулмарӗ. Пӗрре уйра тракторпа сухалатӑп. Ман пата Михал йӑмӑкӗ чупса пычӗ. Салтак йывӑр иккен, мана питӗ курасшӑн тет. Трактора ҫырма тӗпне лартрӑм та чупрӑм яла. Михалпа калаҫрӑмӑр, хӑйне аванах туйнӑ пек тата. Унран уйрӑлсан тепӗр икӗ сехет иртрӗ-и, ман пата каллех Марфа чупса пычӗ те Михал вилсе кайни ҫинчен каларӗ»,- хурланса аса илет асанне.

Ҫапла, хӑйсене те, ҫумри ҫывӑх ҫынсене те темле йывӑр пулнине пӑхмасӑр кашни минутпа, кашни самантпа усӑ курса Ҫӗнтерӗве ҫывхартма тӑрӑшнӑ тылри ҫамрӑк хӗрсемпе арӑмсем, ачасем. Тракторӗ ванса кайсан юсав ӗҫне те хӑех тунӑ асанне.

«Тем те тӳсрӗмӗр эпир. Халь пурӑнма аван, ӗлӗкхи мар. Укҫине те параҫҫӗ. Шел, аслаҫу вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ»,- сӳтет хӑйӗн сӑмах ҫӑмхине юратнӑ асанне. Сӑмах май каласан, манӑн асатте, Геннадий Фомич Фомин, вӑрҫӑ вутӗнче пиҫнӗ ҫын. Вӑрҫӑран таврӑнсан нумай ҫул бригадирта ӗҫленӗ. Асаннепе иккӗшӗ те вӑрҫӑ юхӑнтарнӑ хуҫалӑха йӗркене кӗртме тӑрӑшнӑ. Асанне Ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн тата тепӗр ҫичӗ ҫул тракторпах ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫичӗ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ. Тракторпа ӗҫлеме пӑрахсан та хӗвел тӑриччен уя тухса утнӑ, кун ҫути пӗтсен киле таврӑннӑ. «Гектарӗпех ҫӗр улми кӑларма валеҫсе паратчӗҫ. Юрать, ачасем пулӑшатчӗҫ, килте те, уйра та ман ҫумрахчӗ»,- ӑшшӑн сӑмах пуҫарать хӑйӗн ачисем ҫинчен асанне. Ачисем тесен, вӗсемпе чӑннипех те мухтанмалӑх пур унӑн. Пурте шкултан лайӑх вӗренсе тухса юратнӑ професипе ӗҫлеҫҫӗ, хисепе тивӗҫнӗ.

Асаннепе калаҫса ларнӑ майӑн стена ҫинче рамӑра ҫакӑнса тӑракан 60 ҫул каялла ӳкернӗ сӑн ӳкерчӗк ҫине пӑха-пӑха илетӗп. Ман ҫине ҫаврака питлӗ, пысӑк хӑмӑр куҫлӑ 19 ҫулхи хитре хӗр пӑхать.

Ман ӑшра шеллев туйӑмӗ хускалать: ҫакӑн пек хитре хӗрсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче каччӑсене те куҫран пӑхтарайман ӗнтӗ. Чаплӑ тумӗсене тӑхӑнса, яшсемпе ҫавтӑнса уявсенче те савӑнса курайман. «Трактористсен бригадинче хӗрсем кӑначчӗ, плугарьсем - шкулта вӗренекен арҫын ачасем. Уяв тесен-и? Пӗрре ярмӑкка ирттерчӗҫ. Эпир тракторсене ҫул хӗррине лартрӑмӑр та пӑхса лартӑмӑр кӑштах ярмӑрккӑна каякан ҫынсем ҫине. Пӗтӗм уявӗ те ҫав анчах пулчӗ пирӗншӗн»,- тунсӑхлӑн аса илет асаннем хӑйӗн ҫамрӑклӑхӗ ҫинчен.

Ман умра ҫамрӑклах вӑрҫӑ хӗн-асапӗпе, пурнӑҫ терчӗ-нушипе пӗркеленнӗ пит-куҫлӑ юратнӑ ҫыннӑм ларать. Яланах ӗҫлет вӑл, пӗрре те пушӑ вӑхӑт ҫук унӑн. Халӗ те ак арлать, арлать...

Пирӗн ялта Ҫӗнтерӗве тылра туптанӑ ҫынсем ҫеҫ юлчӗҫ ӗнтӗ. Нумай пулмасть тӑшмана хирӗҫ алла пӑшал тытса ҫапӑҫнӑ А.Ф.Федоров вилсе кайрӗ. Ватти-вӗтти пуҫтарӑнтӑмӑр ӑна юлашки ҫула ӑсатма...

Вӑрҫӑра вилнисене асӑнса лартнӑ палӑк патне Ҫӗнтерӳ кунӗ пӗчченех тухса тӑратчӗ-ха Александр Федорович, халь ӗнтӗ вӑл та ҫук. Шкула вӗренекенсемпе тӗл пулӑва ҫӳретчӗ. Вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ, хӑйсем мӗн тӳссе ирттерни ҫинчен каласа паратчӗ. Пире лайӑх вӗренме, ырӑ кӑмӑллӑ, лайӑх ҫынсем пулма сунатчӗ.

Ҫӗнтерӗве уявлама палӑк умне кӑҫалхи ҫул тылри ӗҫченсем, пирӗн асаннесем ҫеҫ тухса тӑрӗҫ ӗнтӗ. Эпир вӗсене уяв ячӗпе саламлӑпӑр, вӗсем пире парнеленӗ тӑнӑҫ пурнӑҫа упрама сӑмах парӑпӑр.

Тайма пуҫ сире, ирӗклӗхшӗн пуҫ хунӑ паттӑрсем, ҫав ирӗклӗхшӗн, Ҫӗнтерӳшӗн тылра ырми-канми ӗҫленӗ асаннесем.

# КИЛТИ ХУÇАЛĂХ

## АКА ТĔРЛĔРЕН ПУЛАТЬ

**Пахча-çимĕç культурисен тухăçне агротехникăна лайăхлатнипе кăна мар, акан тĕрлĕ меслечĕпе усă курса та ӳстерме пулать. Мĕнлерех майсемха вĕсем?**

**Тепĕр хут акни.** Çак майпа пĕр лаптăк çинче икĕ-виçĕ хут тухăç илеççĕ. Кун пек меслетпе усă курса çак культурăсене акма пулать:

1. Малтан редис, кайран укроп е салат, унтан каллех редис;
2. Ир пулакан ешĕл çимĕç (салат, шпинат, укроп, симĕс çулçă туса илме лартнă сухан) хыççăн - июньĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче вăтам вăхăтра тата кая юлса пулакан купăста, хăяр, помидор;
3. Ир пулакан çĕр улмие августăн 1-мĕшĕччен кăларсан - чечеклĕ купăста;
4. Чечеклĕ купăстана, енчен вăл çăпанлă мар (чир) пулсан, пĕр йăран çинче икĕ хут та туса илме пулать. Чечеклĕ купăстана пĕрремĕш партипе лартсан ешĕл çимĕç акма юрать.

**Çăралатнă ака** тени пĕр йăран çине темиçе культура акса çăралатнине пĕлтерет. Чечеклĕ купăста йăранĕ çине, калăпăр, ешĕл çимĕç е редис хутăш акма пулать. Кая юлса пулакан шурă пуçлă купăстана е помидора та маларах асăннă культурăсемпе пуянлатма юрать. Анчах ку тĕслĕхре вĕсене тĕп культурăран маларах акмалла. Шурă пуçлă купăста тата помидор чечеклĕ купăстана та тиркемеççĕ.

**Хутăш ака.** Икĕ культурăна е пĕрле, е уйрăм акаççĕ, анчах - пĕр лаптăк çине. Хăяр кишĕрпе тата кăшманпа акнине кăмăллать. Капла тунă чух ака виçине икĕ хут пĕчĕклетеççĕ. Тĕслĕхрен, 10 тăваткал метр пуçне 8 грамм хăяр, 2 грамм кишĕр акмалла. Кишĕре апрель вĕçĕнче - май пуçламăшĕнче акмалла. Ретĕн кăнтăр енне 10 сантиметрта май вĕçĕнче хăяр акаççĕ.

❋ Мода

## ХИТРЕ ÇИ-ПУÇ ТУЯНАР-И?

**Çуркунне валли пушмак туянасшăн та, темлине илмелле. Халĕ мĕнлисене тăхăнаççĕ-ши?**

**М.ПЕТРОВА.**

Форма пирки каласан, шĕвĕр вĕçлисем çавраланасси темиçе сезона тăсăлса кайрĕ. Çавăнпа пĕр канаш: хăвăр кăмăлланине кирек еплине те туянма пултаратăр. Анчах ботинкăсемпе ботильонсем модăра мар. Ура хырăмне çăт тытакан тӳрĕ çӳллĕ атă тата ботфорт туянни эсир вăхăт таппипе тан пынине палăртĕ.



Ытти пирки каласан, паянхи кун çаксем модăра: милитари стилĕллĕ икĕ аркăллă, стойка-çухаллă пальто; тирлĕ кĕске куртка; тăршшĕ пилĕк таран çыхнă кĕске кофта (вăл тӳмеллĕ мар, çыхса лартмалласкер); тĕрлĕ ӳкерчĕклĕ колготки; тăршшĕ чĕркуççи таран юбка-тюльпан; сăрантан тунă сарлака пиçиххи; фольклор стилĕллĕ, çавăн пекех йĕрлĕ е тăваткал ӳкерчĕклĕ çи-пуç; тӳрĕ бриджи е галифе; пусмаран - бархат, деним, çĕр мамăк, пурçăн; сăран, замша е пусмаран çĕленĕ сумка, ăна е тĕрлесе, е бантпа, е ярапапа илемлетнĕ.

❋ Пахчаçăсен кĕтесĕ

## ЧИРПЕ ВĂХĂТРА КĔРЕШМЕЛЛЕ

Хальлĕхе юр кайса пĕтмен-ха, ун шывне пухма кая юлман. Юр шывне 60-65 градус таран ăшăтмалла. Унпа пĕрĕхнĕ хура хурлăхан, йĕплĕ хурлăхан (крыжовник) лайăхрах ӳсме пуçлаççĕ.

Хура хурлăхан туратти çинче кӳпчесе кайнă папак асăрхарăр пулсан, ăна тăхтаса тăмасăр татса перĕр. Унта хăрушă сăтăрçă - папак сăвăсĕ - ларать. Вăхăтра пĕтермесен тухăçа тĕппипех пĕтерме пултарать.

Хăмла çырли, чие тĕмĕсене, слива йывăççине цитоспороз текен чир ярса илме пултарать. Унăн палли - ӳсен-тăран туни çинче хупă тĕл-тĕл типсе ларни. Çавăн пек вырăна касса илмелле, 3 процентлă пăхăр купоросĕпе (10 литр шыва 300 грамм препарат ямалла) сĕрмелле. Цитоспорозпа чирлĕ хăмла çырли тĕмĕсене кăлармалла.

## ВĂРЛĂХНЕ КУРА ÇИМĔÇĔ

Акас умĕн вăрлăха суйламалла. Аманнисемпе вĕттисене акмалла мар. Суйлама чи ансат меслет - шыва ярса сортлани. Çӳле хăпарнисем - акма юрăхсăр. Савăт тĕпне ларнисене марля витĕр сăрăхтарса илĕр те хут çине хурса типĕтĕр.

Кишĕр, купăста, редис вăррине 3-5 процентлă тăвар шывне ямалла: пушă вăрă çиеле хăпарать, ăна илсе пăрахмалла. Тĕпне юлнисене тăрă шывпа икĕ-виçĕ хут чӳхесе илĕр.

Акас умĕн кишĕр, сухан, сельдерей вăррине пĕр-ик кун шывра тытмалла. Çав вăхăтра шывне икĕ-виçĕ хут улăштармалла. Акиччен вăрлăха кăштах типĕтмелле.

Вăрлăха чир лекесрен ăна хĕвел çинче хĕртсе илмелле. Марганцовка шывĕнче (пĕр стакан шыв пуçне 2 грамм марганцовка) тытни те аван.

Çĕр улмине лартас умĕн калчалантармалла.

❋ Ĕненекенсем валли

## УКÇА КИЛНĔ ЧУХ УНПА КАЛАÇĂР

❋ Укçана сулахай алăпа илмелле, сылтăм алăпа памалла.

❋ Укçана вырттармалла мар, вăл çаврăнса çӳренине юратать. Шанчăклă туссене кĕтмелле пама пултаратăр, каялла килмесси шиклентерет пулсан, расписка илĕр. Ытах апла тăвас килмесен, банка хума пулать.

❋ Укçа килнĕ чух ăна савăнса илĕр, кайнă чух - ан кулянăр.

❋ Тупра пухас тесе тĕллев ан лартăр. Тĕллев хваттер, машина т.ыт.те туянасси, инçе çул çӳреве каясси пултăр.

❋ Укçана хисеплемелле.

❋ Унпа перекетлĕ пулмалла. Укçа алла килнĕ чух унпа ăшшăн калаçăр. Тăкакланă чух та кăмăлтан сывпуллашăр.

❋ Укçана ытлашши пысăка хурса ан хаклăр. «Укçа пулсан йăлтах пулать» тени те тĕрĕс мар. Сутăн илме çукки те нумай çак çĕр çинче.



В.СОРОКИН фото ӳкерчĕкĕ.

❋ Халăх меслечĕпе сипленетпĕр

### АЧА ÇĔРЛЕ ӲСĔРНĔРЕН

Пĕр стакан сĕте ăшăтăр, унта чĕрĕ çăмарта, пĕр чей кашăкĕ пыл ярăр, пăтратăр. Хутăша икке пайлăр. Çуррине ачана çывăрас умĕн парăр, юлнине холодильника лартăр. Çĕрле ӳсĕрме пуçласан сĕте ăшăтса ĕçтермелле.

### ӲСЛĔКРЕН

Кастрюле пĕр стакан сĕт ярăр, çулăм çине лартăр. Сĕт вĕреме кĕме тытăнсанах унта тасатнă сухан пуçĕ ярăр, вăйсăр çулăм çинче 10 минут вĕретĕр. Сĕте вĕрилле ĕçсе ямалла. Çак сиплеве кунне темиçе хут тумалла.

### САСĂ ÇĔТНĔРЕН

Çăмарта саррине уйăрса илсе çур стакан ăшă сĕтпе хутăштарăр. Пĕчĕк сыпкăмсемпе ĕçĕр, пыра та çав хутăшпах чӳхĕр.

## КĔВЕ ТАПĂНАСРАН

**Халĕ хĕллехи япаласене шкафа вырнаçтарса хума вăхăт çитрĕ. Анчах вĕсене упрассинче хăрушлăх пур: кĕве пĕтерме пултарать. Унран епле асăрханмалла-ха?**

Кĕве аталанăвĕ тăватă тапхăртан тăрать. Малтан çăмарта хурать, кайран хурт, личинка тухать, унтан лĕпĕш çитĕнет. Япаласене юрăхсăра кăлараканĕ - хурт. Лĕпĕш хăй сиен тумасть-ха, анчах çăмарта хурать.

Лĕпĕш хускалмасăр выртакан е çакăнса тăракан, нӳрĕ тумтире тапăнать. Лайăх тасатса типĕтнĕ çипуçа тĕкĕнмест. Кĕве шар ан кăтарттăр тесен пӳлĕме пылесоспа тасатсах тăмалла, тусана нӳрĕ пусмапа сăтăрса илмелле.

Кĕве лаванда çулçине, армутие, пилеш курăкĕн чечекне, типĕтнĕ апельсин хуппине, чĕлĕм утине, герань чечекне тӳсме пултараймасть. Пит çумалли супăнь шăршине те кăмăлламасть.



❋ Арçынсем, чиперленĕр

## КОСТЮМ СИРЕ АН СУТТĂР

**Костюм тăхăннă çи-пуçлă арçын сумлă курăнать. Анчах яланах мар çав. Çи-пуç епле ларнинчен нумай килет. Апла, çак канашсене шута илĕр.**

Кĕпе çухи мăй çинче лăп та шăп лармалла. Пиншак тăхăнман чух галстук çыхни эсир илеме туйма пĕлменнине кăтартса парĕ. Галстук тăршшĕ пиçиххи тăхи çинче вĕçленмелле. Тĕсĕ кĕпепе килĕшсе тăтăр. Кĕпен çанни пиншакран 1-1,5 сантиметр таран тухса тăмалла. Пиншакăн аялти тӳмине вĕçертсе ямалла, çӳлтине вара ан тĕкĕнĕр. Шăлавар ботинка таран пулмалла, ярăм-ярăм хутланса тăни килĕшӳсĕр, ытла кĕски те илемсĕр. Пушмак пирки каласан, костюмпа ботинка вырăнсăр, унпа туфли тăхăнаççĕ.

❋ Потребитель кĕтесĕ

## ИЛЕМЛĔ, АНЧАХ СИЕНЛĔ

Халĕ лавккасемпе пасарсенче кирек мĕнле савăт-сапа тупса илме пулать. Темле материалтан туни пур. Меламинтаннисене те сĕнеççĕ. Сутуçисем персе те кăтартаççĕ: ванмасть. Хăй йăлтăртатса тăрать, çăмăл, шаккасан янăравсăр сас парать, хаклă та мар. Анчах вăл сывлăхшăн сиенлĕ. Шывпа е апат-çимĕçпе тытсан унран формальдегид тухма тытăнать. Вăл онкологи, гастрит, хырăмлăх чирĕсене пуçарса ярать. Савăт çинче илемлĕ ӳкерчĕксем йывăр металл тата ытти наркăмăшлă япала кăлараççĕ.

Енчен те турилкке е курка тĕпне «меламин» тесе çырнă пулсан, ăна ан туянăр. Çӳлерех асăннă паллăсене шута илсе хăвăр та ăна уйăрма вĕренĕр.

❋ Ăстасене пĕлме

## КИВĔ ЗОНТА ПЕМЕ АН ВАСКĂР

**Çумăр вăхăчĕ пуçланчĕ ĕнтĕ. Çакăн пек çанталăкра зонтсăр май килмест. Халĕ унăн вак кăлтăкĕсене пĕтерме вĕренер.**



В.ИВАНОВА фото ӳкерчĕкĕсем.

❋ Зонтăн тимĕрĕ çинче тутăхнă вырăн пулсан ăна лимон сĕткенĕпе сăтăрмалла.

❋ Пусма йĕп çумĕнчен çĕтĕлсе кайсан пусма вĕçне çаврăрса илсе тĕвĕлесе лартăр та зонт йĕппи çумне тыттарăр.

❋ Йĕпе зонта çурма уçса хурса типĕтмелле.

❋ Зонта юсама çук пулсан унăн уйрăм пайĕсемпе усă курма тăрăшăр. Йĕппинчен шило, винт валли отвертка тума пулать, тимĕр йĕртен - йывăç касмалли хатĕр, пусминчен сумка çĕлĕр.

❋ Апачĕ тутлă пултăр

## КИШĔР КАНФЕЧĔ

***500 г кишĕре*** терка витĕр кăлармалла, ***200 грамм песук***, кăштах ***лимон йӳçекĕ*** хушмалла.

Хутăша кастрюле ямалла, вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле, çунасран вĕçĕмех пăтратса тăмалла. Кишĕр çăралсан 100 грамм вĕтетнĕ шăккалат хушмалла, лайăх пăтратмалла. Аçтăрхан мăйăрĕ пысăкăш çавраш касем тăвăр та сахăр çăнăхĕнче е какао-порошокра йăвалăр.

## «ЧĔКЕÇ ЙĂВИ» КАНФЕТ

***3 çăмарта*** саррине ***150 г сахăрпа*** кăпăшлантармалла, ун хыççăн вĕтетнĕ ***150 г мăйăр*** ямалла, лайăх пăтратмалла. Канфета çу сĕрнĕ çатмана ярса вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле, пĕчĕк татăк туса касмалла.

Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.

